Агробизнес: мĕнле пулмалла вăл малалла пăхсан?

Ĕнисем сахалрах – сăвăм ытларах?

Çакăн пек ыйтуллă пĕтĕмлетӳ тума пулать районти пĕрлешӳллĕ хуçалăхсем район администрацийĕн ял хуçалăх пайне кулленхи сăвăма кăтартса паракан оперативлă кăтартусене тишкерсен.

Паянхи куна районти ял хуçалăх производство кооперативĕсемпе ял хуçалăхĕн ытти харпăрлăх формисемлĕ предприятийĕсенче 2428 пуç сумалли ĕне тăрать. Ку вăл пуçланнă хĕлĕн малтанхи кунĕсенче. Иртнĕ çул çак тапхăрта асăннă хуçалăхсенче пурĕ 2990 пуç сумалли ĕне пулнă. Вĕсем пĕлтĕрхи декабрĕн 16-мĕшĕ тĕлне пĕтĕмпе 20606 килограмм сĕт панă тата пĕр ĕне пуçне тивекен талăкри вăтам сăвăм çалăхсем ĕнесене пĕтĕмпех пĕтернĕ (пурĕ 276 пуç). Çав вăхăтрах «Лидер» агрофирма 8 пуç ĕне хушнă (48 пуç).

Иртнĕ çулталăк хушшинче ĕне кĕтĕвне чылай чакарнисем хушшинче Е. Андреев яч. хис. (20 пуç), «Передовик» (46 пуç), «Сеятель» (23 пуç), «Рассвет» (147 пуç), «Ударник» (40 пуç), Чапаев яч. хис. (18 пуç) хуçалăхсем. Çакнашкал ӳкерчĕкре хуçалăхсем кăçал çитес хĕле кĕме выльăх апачĕ хатĕрлессипе епле ĕçленипе паллашма та интереслĕ пулĕ вулакана. Ял хуçалăх производство кооперативĕсем утă 5710 тонна (пĕлтĕр – 7191 тонна), 7068 тонна сенаж (пĕлтĕр – 10507 тонна), 18275 тонна силос (пĕлтĕр – 20020 тонна), 31 (146 тонна) тонна витаминлă курăк çăнăхĕ, 2602 (2121) тонна тымар çимĕç, 586 (600) тонна çĕр улми, 11309 (12425) тонна концентрациленĕ апат хатĕрленĕ. Çак цифрăсене тишкерсен хуçалăхсем кăçал хĕл каçма кашни условнăй выльăх пуçне 19,1 центнер апат единици (пĕлтĕр – 15,9 ц) хатĕрлени курăнать. Уйрăммăн сумалли ĕнесем тĕлĕшпе пăхсан ку ӳкерчĕк çапла курăнать: пĕр ĕне пуçне 29,6 центнер апат единици. Пĕлтĕрхинчен 6,3 центнер, наукăпа пăхнинчен 1,6 центнер ытларах. Ыттине хăвăрах шутласа пăхăр.

Сĕт сăвасси чакнипе пĕрлех районти пĕрлешӳллĕ хуçалăхсенче майракаллă шултра выльăхсемпе сыснасен йышĕ сахалланни те шухăшлаттарать. Çулталăк хушшинче (декабрĕн 1-мĕшĕ тĕлне) хуçалăхсенче ĕне выльăхсен хисепĕ 7001 пуçран 5688 пуçа, сыснасен йышĕ 13659 пуçран 8071 пуçа юлнă. Кунта пĕтĕм тĕнчери экономика кризисне пула унччен илнĕ кредитсене тӳлесе татма хуçалăхсем выльăхпа усă курни сисĕнет. Асăннă тапхăрта майракаллă шултра выльăхсен хисепне «Лидер» агрофирмăра 8 пуç, Ильич ячĕпе хисепленекен ял хуçалăх производство кооперативĕнче 17 пуç хушса 54 тата 705 пуçа çитернĕ. Сыснасен йышĕ Чкалов ячĕпе хисепленекен ял хуçалăх производство кооперативĕнче кăна 30 пуç хушăннă (157 пуç).

РАЙОНТИ ПĔРЛЕШӲЛЛĔ ХУÇАЛĂХСЕНЧЕ ДЕКАБРĔН 16-МĔШĔ ТĔЛНЕ ПĔР ĔНЕ ПУÇНЕ ВĂТАМРАН МĔН ЧУХЛĔ СĔТ СУНИНЕ КĂТАРТНИ (КИЛОГРАМПА)
Колонкăсенче: 1. Кăçал сунă. 2. Пĕлтĕрхипе танлаштарсан («–» – сахалрах).

Е. Андреев яч. хис.	6,5	0,1	«Свобода»	8,2	-1,3
«Волга»	–	-5,0	«Сеятель»	3,0	-3,0
«Восток»	7,9	-3,8	Суворов яч. хис.	12,0	1,1
«Герой»	10,8	0,7	«Рассвет»	3,8	0,5
К. Иванов яч. хис.	–	-3,7	«Ударник»	10,3	0,1
Ильич яч. хис.	9,0	-1,6	Чапаев яч. хис.	3,0	-0,3
Ленин яч. хис.	3,5	-2,6	«Чемеево»	–	-2,3
«Лидер»	3,0	-7,0	Чкалов яч. хис.	11,7	2,2
«Оринино»	10,9	-2,8	«Хлебороб»	–	-3,8
«Передовик»	4,3	-0,5	**РАЙОНĔПЕ**	**8,5**	**0,2**

8,3 килогрампа танлашнă пулсан, çулталăк хушшинче 562 пуç ĕне «çухатни» хуçалăхсем 4306 килограмм сĕт суса çитерейменни пирки калать. Апла пулсан выльăх-чĕрлĕх патĕнче ĕçлекенсем сахалрах выльăхпах «ытларах» продукци илес çул çине тăнă: кăçал пĕр ĕне пуçне тивекен вăтам сăвăм 8,5 килогрампа танлашать. Çакă вырăнсенче «çĕнĕ технологисемпе» анлăрах усă курнине те çирĕплетет. Халĕ каланине кам мĕнле ăнланĕ ĕнтĕ...

Ĕне тытакансем тухăçлăрах ĕçлеме тăрăшаççĕ пулсан, вĕсемпе юнашарах сĕт отраслĕ çине алă сулнисем те çук мар. Акă çулталăк хушшинче «Волга», «Хлебороб», К. Иванов ячĕпе хисепленекен тата «Чемеево» хуçалăхсем çĕнĕ технологисемпе çăмăлтарах ĕçлеççĕ. Çав вăхăтра «Восток» агрофирма 7,9 пуç ĕне хушнă (10,8 пуç). Çак ĕçшĕн пĕрремĕш кунран пуçласа 1940 çулччен Федор Иванов тимлет. Ун хыççăн хаяр вăрçă тапхăрĕнче тата Тăван çĕр-шыва вăрçă юхăнчăкĕнчен тăратнă çулсенче хорпа ĕçлессине Павел Трофимович Трофимов хăй аллине илет. Йывăр çулсенче сахал савăнтарнă-и-ха асăннă коллективĕн çамрăк юрăçи. Пĕр юрă, иккĕ, виççĕ, хĕрсемпе каччăсен хаваслă ташши, шӳтлĕ калав... Курма пынисене хăйсем паян Культура çуртне тухнишĕн пĕртте салху сăнĕ çапмарĕ.

Турай хорĕ... Вăрăм унăн историйĕ. Ялти кашни çемьене хăй ытамне илнĕ вăл хăй вăхăтĕнче. Паян та кунти ташăçăсемпе юрăçсене кирек хăш сцена çинче те хапăл тусах çул параççĕ. Ку вăл паян, çичĕ хут тар юхтарса уçнă çул çинче. Историе пăхсан вара...

1918 çул. Тулта ноябрь сиввисем тăраççĕ. Кĕрхи ĕçсем вĕçленнĕ май ялти комсомолецсем тăрăшнипе тата Федор Иванович Иванов ертӳçĕ пуçарăвĕпе ял çыннисен пушă вăхăтне усăллă ирттерес тĕллевпе Турай хорĕ пĕрремĕш утăмсем тăвать. Ĕçлеме те, канма та ӳркенмен яш-кĕрĕм Турайри артистсен ятне кĕçех таврари ялсене сарать. Çак ĕçшĕн пĕрремĕш кунран пуçласа 1940 çулччен Федор Иванов тимлет. Ун хыççăн хаяр вăрçă тапхăрĕнче тата Тăван çĕр-шыва вăрçă юхăнчăкĕнчен тăратнă çулсенче хорпа ĕçлессине Павел Трофимович Трофимов хăй аллине илет. Йывăр çулсенче сахал савăнтарнă-и-ха асăннă коллектив ялти ĕç паттăрĕсене. Кӳршĕ ялсенче те вĕсем яланах кĕтнĕ хăнасем пулнă. П. Трофимов хыççăн хор коллективне тĕрлĕ çулсенче Н. Горшков, С. Ярдыков, Н. Филиппов, В. Салтыков ертсе пынă. Вĕсемпе пĕрле ĕçленисем паян та çав вăхăтсене ырăпа аса илеççĕ. «Пур ĕçре те, пур çĕрте те чыслă пулчĕ сан яту. Пĕр-пĕрне курса калатпăр сан çуралнă кун», – тесе.

Турай хорĕ 90 çул тултарнă ятпа унăн ветеранĕсене иртнĕ кунсенче Турайĕнчи вăтам шкулта вĕрентекенсен, Муркаш лицейĕнчи кадетсен класĕ, Муркашри вăтам шкулти ташăçăсен ушкăнĕсем, Культура çуртĕнче паян ĕçлекенсем саламларĕç. Муркаш районĕпе Турай хорĕн аталанăвĕн саманчĕсем тӳр килнĕрен савăнăçлă каç кашнин асĕнчех юлчĕ. Уйрăммăн илсен, Муркашран килнĕ Л. Митрофанова хореограф уяв илемĕшĕн ытларах та тăрăшни курăнчĕ.

Пухăннисене çак уявпа ку тăрăхри хĕрарăмсен канашĕн ертӳçи И. Быркина тата инвалидсен канашĕн ертӳçи Р. Николаева та саламларĕç.

Лидия КРАСНОВА,
Турайĕнчи Культура çурчĕн директорĕ.

Район 65 çул тултарнине халалласа

Турай хорĕ 90 çул тултарчĕ

РЕДАКЦИРЕН. Паян районăмăр 65 çул тултарнине халалласа аса илӳсен черетне уçатпăр. Мĕнпе палăрнă-ха Муркаш ен иртнĕ çулсенче? Эпир ку таранччен курайман-асăрхайман мĕнле тăрăшулăхпа ĕçченлĕх тăрать унăн ĕçченĕсен хул пуççийĕсем çинче, мĕнле йывăрлăхсене çĕннĕ вăл, мĕнле лару-тăрура хăй ятне çухатман? Çак йĕркесемпе паллашакан кашни вулавçăнах аса илӳ çăмхи сӳтĕле пуçларĕ пулĕ. Вĕсемпе эсир хаçат вулакансене паллаштарма пултаратăр. Сирĕн çырăвăрсене эпир хапăл туса кĕтетпĕр.

Пурнăçри кашни пулăм пĕрпĕринпе тачă çыхăнура пулнине никам та хирĕçлес çук. Юратнă анне, хамăрăн ĕмĕр манми тавралăх, ăшă хĕвел, çывăхри ансăр тăкăрлăк, ял хыçĕнчи çамрăк ĕшне, тырă вырса таврăнакан хресченĕн савăнăçпа тулнă юрри т. ыт. те. Пытармăпăр, вĕсем пурте хăйсем хушшинче тарăн çыхăнура. Пĕри тепринсĕр аталанаймастех.

... Аннеçĕм кĕтет пуль пире,
Сăра вĕретет пуль,
Хуплу пĕçерет пуль,
Тăрать пуль тухса пӳрт умне, – шăрантарать савăнăçлă каçра Турайри хор коллективĕн çамрăк юрăçи. Пĕр юрă, иккĕ, виççĕ, хĕрсемпе каччăсен хаваслă ташши, шӳтлĕ калав... Курма пынисене хăйсем паян Культура çуртне тухнишĕн пĕртте салху сăнĕ çапмарĕ.

Турай хорĕ... Вăрăм унăн историйĕ. Ялти кашни çемьене хăй ытамне илнĕ вăл хăй вăхăтĕнче. Паян та кунти ташăçăсемпе юрăçсене кирек хăш сцена çинче те хапăл тусах çул параççĕ. Ку вăл паян, çичĕ хут тар юхтарса уçнă çул çинче. Историе пăхсан вара...

1918 çул. Тулта ноябрь сиввисем тăраççĕ. Кĕрхи ĕçсем вĕçленнĕ май ялти комсомолецсем тăрăшнипе тата Федор Иванович Иванов ертӳçĕ пуçарăвĕпе ял çыннисен пушă вăхăтне усăллă ирттерес тĕллевпе Турай хорĕ пĕрремĕш утăмсем тăвать. Ĕçлеме те, канма та ӳркенмен яш-кĕрĕм Турайри артистсен ятне кĕçех таврари ялсене сарать. Çак ĕçшĕн пĕрремĕш кунран пуçласа 1940 çулччен Федор Иванов тимлет. Ун хыççăн хаяр вăрçă тапхăрĕнче тата Тăван çĕр-шыва вăрçă юхăнчăкĕнчен тăратнă çулсенче хорпа ĕçлессине Павел Трофимович Трофимов хăй аллине илет. Йывăр çулсенче сахал савăнтарнă-и-ха асăннă коллектив ялти ĕç паттăрĕсене. Кӳршĕ ялсенче те вĕсем яланах кĕтнĕ хăнасем пулнă. П. Трофимов хыççăн хор коллективне тĕрлĕ çулсенче Н. Горшков, С. Ярдыков, Н. Филиппов, В. Салтыков ертсе пынă. Вĕсемпе пĕрле ĕçленисем паян та çав вăхăтсене ырăпа аса илеççĕ. «Пур ĕçре те, пур çĕрте те чыслă пулчĕ сан яту. Пĕр-пĕрне курса калатпăр сан çуралнă кун», – тесе.

Турай хорĕ 90 çул тултарнă ятпа унăн ветеранĕсене иртнĕ кунсенче Турайĕнчи вăтам шкулта вĕрентекенсен, Муркаш лицейĕнчи кадетсен класĕ, Муркашри вăтам шкулти ташăçăсен ушкăнĕсем, Культура çуртĕнче паян ĕçлекенсем саламларĕç. Муркаш районĕпе Турай хорĕн аталанăвĕн саманчĕсем тӳр килнĕрен савăнăçлă каç кашнин асĕнчех юлчĕ. Уйрăммăн илсен, Муркашран килнĕ Л. Митрофанова хореограф уяв илемĕшĕн ытларах та тăрăшни курăнчĕ.

Пухăннисене çак уявпа ку тăрăхри хĕрарăмсен канашĕн ертӳçи И. Быркина тата инвалидсен канашĕн ертӳçи Р. Николаева та саламларĕç.

Лидия КРАСНОВА,
Турайĕнчи Культура çурчĕн директорĕ.

Вулакан пултарулăхĕ

Ĕмĕтсем...

Ĕмĕтсем вĕçеççĕ,
Ĕмĕрсем иртеççĕ,
Анчах ватлăх кунĕсем
Малаллах шăваççĕ.

Мĕнле чăтнă йывăра:
Çара уран ут çулма,
Тырă вырма çурлапа
Тухса кайнă сĕм çĕрле.

Саншăн килмест кĕтнĕ канăç,
Санăн пурнăçу – çĕн утăм.
Иртнĕ кунсен çаврăнмаççĕ,
Çĕнĕ кунсен вĕçĕ вăрăм.

З. ЯГУНОВА.

Кăпас ялĕ.

01 Çĕнĕ çул умĕнхи асăрхаттару

Елка теттисем хăрушлăх та кăлараççĕ

Урамра нихăш çулхинчен те ытларах ăшă çанталăк тăрать пулсан та, пурсăмăр та кĕтекен Çĕнĕ çул çывăхрах та çывăхрах. Кашниех унран асамлăх кĕтсе ăна анлă уявласа кĕтсе илме хатĕрленет. Çĕнĕ çул вăл – политикăна нихăш енне те пырса тивмен уяв. Çавăнпах ăна пурте пĕр йышра уявласси халăхăн çирĕп йăлинче. Çĕнĕ çула кĕтсе илесси халăхра пысăк уяв вырăннех. Çак самант ытларах асра юлтăр тесе коллективсенче ăна паллă тума тăтăшах çĕнĕлĕхсем кĕртеççĕ, елкăна электричество çутипе, çуртасемпе, пиротехника изделийĕсемпе илемлетеççĕ. Халĕ каланине шута илсе çак тапхăр пушар тухаслăх тĕлĕшпе пысăк хăрушлăх кăларса тăратать. Манмалла мар, çакăнта пиротехника изделийĕсем малти вырăна тухаççĕ.

Паянхи рынок пиротехника изделийĕсенчен пуян. Вĕсем хушшинче иккĕленӳллĕ производство продукчĕсем те çук мар. Шăпах вĕсене туянакан савăнăç кĕрекине хăрушлăх илсе çитерет те. Кунпа пĕрлех пиротехника хатĕрĕсене ачасене шанса пани те инкеке çул уçни тесе калас килет. Пиротехника хатĕрĕсен хăрушлăх факторĕсем: вĕсен куçăмĕн кинетика энергийĕ, сирпĕнес вăй тата ванчăксем инçете сапаланас туртăм т. ыт. те.

Пиротехника хатĕрĕсене ваккăн сутма суту-илӳ залĕллĕ магазинсемпе павильонсенче кăна ирĕк пур е куçса çӳрекен ятарлă киосксенче.

Сутăва кăларакан пиротехника хатĕрĕсене упрама ятарлă пӳлĕмсем кирлĕ. Вĕсемпе усă курассине тата унта мĕн чухлĕ пиротехника хатĕрĕ упрассине вырăнти патшалăх пушар надзорĕн органĕсемпе килĕшсе татăлмалла. Юрăхсăра тухнă пиротехника хатĕрĕсем уйрăм вырăнта упранмалла.

Кашни пиротехника изделийĕ пуçнех (ваккисене валли – кашни упаковкăна) унпа епле усă курмаллине вырăсла çырнă инструкци пулмалла. Вĕсемпе усă курнă вырăнсенче çак хатĕрсене ĕçлеттерсе тĕрĕслесси пулмалла мар.

Кĕскен каласан, Çĕнĕ çул фейерверкĕ савăнăç çеç илсе килтĕр тесен пасарсенче е ют çынран иккĕленӳллĕ пиротехника хатĕрĕсем ан туянăр. Туяннисенпе те усă куриччен инструкцийĕсемпе тĕплĕн паллашăр.

Çывхаракан Çĕнĕ çул сире савăнăç çеç кӳтĕр!

И. СМИРНОВ, патшалăх пушар надзорĕн районти уйрăмĕн ертӳçи.

Сăмах – специалиста

Сыснасен африка чуми

Раççей Федерацийĕн Президенчĕ палăртнă «АПКна аталантарасси» приоритетлă наци проектĕнче те, экономика аталанăвĕн 2020 çулччен-хи планĕнче те, Чăваш Республикин Президенчĕ 2009 çула Çĕр ĕçченĕн çулĕ тесе палăртнинче те обществăлла выльăх-чĕрлĕхе аталантарасси, унран продукци туса илессине палăрмаллах ӳстересси тĕп вырăнта. Анчах çак ӳсĕм картлашкине сывă выльăх-чĕрлĕхпе çеç çĕнме пулни те куç умĕнчех. Çакна ăнланса паян эпир сирĕнпе сыснасен африка чуми пирки калаçăпăр. Пĕрлешӳллĕ хуçалăхсемпе пĕрлех килти хушма хуçалăхсенче сысна тытакансемшĕн те ку ăнлантару ĕçĕн усси пуласса шанатăп.

Сыснасен африка чуми – выльăхсен хăвăрт ерекен чирĕ. Чир пуçлансан вăл чирленĕ выльăхсене йăлтах майлă вĕлерсе пĕтерет. Чирĕн вирусĕ температура режимне парăнмасть. Типĕтни те, шăнтса лартни те, çĕрне вăхăт та уншăн хăрушă мар. Чирлĕ сыснасен ашĕнче, тĕтĕмленĕ какайра чир вирусĕ 5-6 уйăх таран пурăнайрать.

Инфекцин тĕп çăл куçĕ – чирлĕ тата вилнĕ сыснасем юнашар пулни. Чирлесе ирттернĕ выльăхсем нумай вăхăтлăха вируса упраççĕ тата сараççĕ. Сывă сысна африка чумипе чирлесси вăл чирлĕ выльăхсемпе тӳрременех юнашар пулнă чух ӳтрен, сĕлекерен, сывлав органĕсем урлă тата вилнĕ е пуснă килти чĕр чунсемпе тискер кайăксен какайĕпе, аш продукчĕсемпе, выльăхсен шалти органĕсемпе, юнпа, шăкпа каяш урлă пулса иртет. Чир вирусне саракансем шутне чирлĕ выльăха пăхакансем, çав выльăхсемпе тӳрременех хутшăнура пулнă выльăхсемпе кайăк-кĕшĕк те кĕреççĕ.

Чирĕн клиника паллисем. Выльăхсен ӳт температури 41,5 - 42 градус таран ӳссе каять, аппетит пĕтет, шыв ĕçесси ӳсет, вĕсем хăйсене пусăрăнчăк тытаççĕ, сăмса юхать, юнлă варвитти палăрма пуçлать, сысна амисем аборт тăваççĕ. Сыснасен сăмсинчен юн кайни те, хырăм çинче е хăлхасем патĕнче юн тухма пуçлани те (вăл вырăнсем хăмăр хĕрлĕ тĕслĕ пулаççĕ) – чир паллисем. Кунашкал сысна 7-10 кунтан вилет.

Сынасен африка чумин вирусĕ ытти чĕр чунсемшĕн те, этемшĕн те хăрушă мар.

Чиртен асăрханмалли çул-йĕр. Çак хăрушă чиртен, куратăр ĕнтĕ, сывалма питех мар. Çавăнпа та вăл пирĕн алăкран шаккиччен хамăрăнах асăрханулăха ӳстермелле. Çакна валли сысна фермисене (комплексене) «хупă» майпа йĕркелемелле. Ăна валли сысна фермин территорине пĕтĕм периметрпа ют çынсемпе ытти выльăх-чĕрлĕх контрольсĕр кĕрсе ан çӳреччĕр тесе 2 метр çӳллĕш картапа çавăрмалла. Ферма территорине кĕрсе çӳремелли çивитиллĕ вырăнта дезинфекци барьерĕ пулмалла. Ăна сивĕ вăхăтра ăшăтса тăрассине йĕркелемелле. Сыснасене тула кăлармасăр тытма тăрăшмалла. Вĕрире тытман аш-шăмăна сыснасене парассинчен пăрăнмалла. Сыснасем туяннă чух вĕсене туяннă вырăнта ветеринари тĕлĕшĕнчен мĕнле лару-тăру пулнине çирĕплетекен тата классикăлла чумаран вакцина тунине калакан ветсправка пуррине пăхмалла. Чирĕн клиникăлла паллисене асăрхасан çийĕнчех вырăнти ветеринари учрежденине е «Муркаш районĕнчи выльăх чирĕсемпе кĕрешекен станци» патшалăх учрежденине пĕлтермелле. Хир сыснисемпе сысна какайне ветсанэкспертиза тумалла. Пур формăллă хуçалăхсенче те сыснасен кĕтĕвне пăхсах тăмалла. Сысна сарайĕсемпе витисене кăшлакан чĕр чунсенчен хӳтĕлессине самантлăха та манмалла мар. Пӳлĕмсене вăхăтран вăхăта дезинфекцилесси кун йĕркинчех тытмалла. Тислĕке ятарлă вырăнсенче упрамалла.

Çаксене пурнăçласси йывăр ĕçех те мар ĕнтĕ, анчах... Иртнĕ кĕр кунĕсенче Раççей Федерацийĕн Кăнтăрти федераллă округĕнче сыснасен африка чуми вăй илнĕ хыпар пирĕн пата та çитрĕ. Чир тĕслĕхĕсене Краснодар тата Ставрополь тăрăхĕсенче, Çурçĕр Осети-Аланире, Чечен Республикинче тупса палăртнă. Çак чире пула Раççей Федерацийĕнче 50 пин пуçа яхăн сысна вилнĕ те ĕнтĕ.

Эпизооти лару-тăрăвне тишкерни чир пуçаруçисем икĕ тĕрлĕ çулпа сарăлни пирки калать: пĕрремĕшĕ – чиртен таса территорисене ăна чирлĕ хир сыснисем илсе килни, иккĕмĕшĕ – сыснасене тата вĕсенчен хатĕрленĕ продуктсене санкцисемсĕр вырăнтан вырăна куçарни.

Г. КИРИЛЛОВА, районăн тĕп эпизоотологĕ.

«Хыпар» çырăнăр – хыпарлă пулăр!

Хисеплĕ тăвансем, чăвашсем! Халăхăмăрăн тĕп хаçачĕ – «Хыпар» – пĕр ĕмĕр ытла ĕнтĕ пирĕнпе юнашар пурнăç çаврăмне çăмхалать: республикăн кун-çулне çутатать, мухтавлă çыннăмăрсемпе паллаштарать, культура анине илсе кĕрсе чун çимĕçĕпе сăйлать, чăвашлăха упраса та аталантарса пыма мехел парать. «Хыпарăн» пĕрремĕш редакторĕ Николай Никольский калашле – хаçат ырра вĕрентет, пурнăçăн паха енĕсем патне çул уçать, ăнтăлма хистет.

Эсир «Хыпара» çырăнма ĕлкĕреймен-и-ха? Апла пулсан – васкăр! Çырăнтару тапхăрĕ вĕçленесси нумай юлмарĕ.

Кашни кун тухакан «Хыпара» 2009 çулăн 1 çурри валли çырăнмалли хак – 456 тенкĕ те 60 пус. Индекс – 54800.